Çур аки паттăрĕсем

# Ĕçре хастар, тăрăшуллă



Çур аки пыракан уй-хире тухатăн та çĕр ĕçченĕ ирне-каçне пăхмасăр хирте вăй хунине курса тĕлĕнетĕн. Уяв кунĕсенче хресчене чысланине тĕл пулсан чĕрене савăнăç туйăмĕ хупăрласа илет. Пур-ха пирĕн хушăмăрта чунне парса ĕçлекенсем, пур-ха вĕсене чыслăн хисеп тăвакансем. Кăçалхи район кунĕнче Ильич яч. хис. хуçалăхăн механизаторне Николай Ильич Петрова **(сăн ӳкерчĕкре)** сцена çинче чысласан унччен палламан çыншăн та савăнтăм.

Тивĕçлĕ чысланине Николай Ильич кăçалхи çур акире те тăрăшуллă ĕçпе çирĕплетрĕ. Хăйне шанса панă «хурçă утпа» хастар механизатор ыйхă канăçне çухатса çуртрисем акса хăварчĕ.

– Çур аки ответлă тапхăр. Çавăнпа та унта пĕччен вăй хунипе тата ыттисемсĕр тăрăшнипе ăнăçу пулаймасть. Халăхран уйрăлмасăр эпир çур акире те, симĕç ĕç çире те, вырмара та пĕрле, – терĕ вăл нумай çул ял хуçалăхĕнче яваплăха туйса ĕçленĕшĕн РФ Ял хуçалăх министерствин Тав çырăвне илнĕ хыççăн.

Н. Петров тепĕр уйăхран 60 çул тултарать. Çак ĕмĕрĕн ытларах пайне вăл ял хуçалăхĕнче ирттернĕ. Малтанах тăван хуçалăхра водительте вăй хунă, халĕ чĕрĕк ĕмĕр ытла ĕнтĕ трактор штурвалĕ умĕнче хуçалăх ĕçĕсене хутшăнать.

Кăçалхи çур акире Ильич яч. хис. хуçалăхăн кĕрхи культурăсен хĕл каçа пĕтнĕ лаптăкĕсемпе пĕрле çуртрисене 610 гектар çинче акмалла пулчĕ. Механизаторсемпе уй-хир ĕçченĕсен тăрăшулăхĕпе Вăçкассисемпе Уйкас Янасалсем çак тĕллеве агротехника ыйтнинчен иртмесĕр-пăрăнмасăр кĕске вăхăтрах пурнăçларĕç. Н. Петровăн ака агрегачĕ вара 300 гектар ытла ĕç пурнăçларĕ. Паян Николай Ильич «иккĕмĕш çăкăр» пуссинче çĕр улми кассисем касса хатĕрлет.

– Паян-ыран çур аки ĕçĕсем пĕтĕмпех вĕçленмелле ĕнтĕ. Ун хыççăн акнă лартнă культурăсене таса-сывă пăхса ӳстерес ĕçе кӳлĕнĕпĕр. Акара Н. Петровпа пĕрлех В. Степанов, Ю. Егоров, И. Порфирьев, çĕр хатĕрлессипе Л. Макаров, А. Петров, А. Васильев, А. Александров механизаторсем хастар пулчĕç. Хире вăрлăхпа удобрени кăларассипе, унччен ăна имçамлассипе-суйлассипе уй-хир бригадин ĕçченĕсемпе хуçалăх специалисчĕсем тав сăмахне тивĕç, – терĕ ĕçсене паянхи куна пĕтĕмлетсе хуçалăхăн тĕп агрономĕ Ф. Егоров.

Пĕр алăран ĕçлесси малашне те ан иксĕлтĕрччĕ.

**А. ПЕТРОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Шанăç кӳрекен хыпар

# Чи лайăх проект

Иртнĕ кунсенче «2010 çулхи чи лайăх инвестици проекчĕ» ята илессишĕн республикăри конкурса пĕтĕмлетнĕ. Конкурса республика территорийĕнче регистрациленнĕ тата ĕçлекен инвесторсем хушшинче 2010 çулхи пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнчен ака уйăхĕн 10-мĕшĕччен ирттернĕ. Конкурсра çак номинацисем пулнă: «Чи лайăх архитектура проекчĕ», «Инновацисем тата инвестицисем», «Ĕç пуçлакан инвестор», «Çулталăкри приоритетлă проект», «Чи лайăх муниципаллă проект», «Пĕчĕк бизнесăн чи лайăх проекчĕ».

Конкурса пирĕн район «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн территорийĕнче ял туризмĕн инфраструктурине аталантарасси» проектпа хутшăннă. Хутшăннă та «Чи лайăх муниципаллă проект» номинацире 1-мĕш вырăн йышăннă. Проекта хатĕрлекенĕпе унăн координаторĕсем – Муркаш район администрацийĕпе В. Г. Кудряшов.

Проектăн пĕтĕмĕшле хакĕ 28,944 миллион тенкĕ. Çак сумăран 7,55 миллион – харпăр хăй укçи. Ытти сумма – инвесторăн. Çак проекта ĕçе кĕртнипе 8000 тенкĕ вăтам ĕç укçиллĕ 60 яланхи тата 90 сезонри ĕç вырăнĕсем пулмалла.

**Хамăр инф.**

Кам епле ĕçленĕ?

## Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи обществăлла выльăх-чĕрлĕх пăхакансен кăçалхи кăрлач – ака уйăхĕсенчи ĕç кăтартăвĕсем

### Ĕне сăвакансем

**1.Дояркăсем. 2. Хуçалăх. 3. Кăçал сунă. 4. Пĕлтĕрхи кăтарту (килогрампа).**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Антонова Ф. Ю. | Суворов яч. хис. | 2800 | 2532 |
| Журавлева Н. Е. | Суворов яч. хис. | 2800 | 2532 |
| Трофимова В. Г. | «Ударник» | 2333 | 1715 |
| Андреева З. С. | «Ударник» | 2239 | 2169 |
| Пушкина Л. | «Восток» | 2221 | 969 |
| Наумова А. | «Восток» | 2131 | 1147 |
| Алексеева Л. П. | «Ударник» | 1971 | 1721 |
| Иванова З. Г. | «Ударник» | 1971 | 1721 |
| Михайлова З. И. | «Ударник» | 1928 | 1583 |
| Печкова В. Н. | Суворов яч. хис. | 1923 | 1644 |
| Михайлова Н. В. | Суворов яч. хис. | 1923 | 1644 |
| Орлова Н. Н. | Суворов яч. хис. | 1923 | 1644 |
| Ковалева Г. П. | «Оринино» | 1900 | 1873 |
| Васильева З. Н. | «Оринино» | 1900 | 1873 |
| Иванова Г. А. | Суворов яч. хис. | 1888 | 1726 |
| Филиппова Т. Н. | Суворов яч. хис. | 1888 | 1726 |
| Макарова В. В. | Суворов яч. хис. | 1888 | 1726 |
| Кириллова Е. А. | «Свобода» | 1839 | 1855 |
| Васильева Л. И. | «Ударник» | 1805 | 1750 |
| Хмелева З. В. | «Ударник» | 1805 | 1750 |
| Майорова М. И. | «Свобода» | 1784 | 2006 |
| Васильева Э. В. | «Оринино» | 1700 | 1589 |
| Уткина С. В. | «Оринино» | 1700 | 1589 |
| Димитриев В. И. | «Ударник» | 1661 | – |
| Семенова Н. Н. | «Ударник» | 1661 | – |
| Алексеева Н. Г. | «Ударник» | 1647 | 1531 |
| Алексеева В. Ф. | «Ударник» | 1647 | 1531 |
| Лата А. И. | «Свобода» | 1600 | 1344 |
| Смирнова Л. И. | «Свобода» | 1574 | 1156 |
| Смирнова Е. А.. | «Оринино» | 1566 | 1441 |
| Артемьева З. Ф. | «Оринино» | 1566 | 1441 |
| Анисимова С. В. | «Свобода» | 1502 | 1806 |
| Трофимова Т. Н. | «Свобода» | 1501 | – |
| Петрова М. Г. | «Свобода» | 1500 | 1811 |

### Сысна пăхакансем
**(çурасем илессипе)**

**1. Сысна пăхакансем. 2. Хуçалăх. 3. Пĕтĕмпе çура илнĕ. 4. Пĕр тĕп ама пуçне.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Суриков Г. В. | «Свобода» | 355 | 10,4 |
| Арапкина Р. А. | «Свобода» | 288 | 9,9 |
| Тихомирова Е. З. | «Свобода» | 268 | 11,2 |
| Петрова Г. А. | «Свобода» | 262 | – |
| Семенова В. А. | «Свобода» | 154 | 9,1 |
| Петрова О. А. | «Свобода» | 136 | 9,7 |
| Ковалева Л. С. | «Оринино» | 131 | |
| Вязова Л. М. | «Оринино» | 131 | |

### Сысна пăхакансем
**(самăртассипе)**

**1. Сысна пăхакансем. 2. Хуçалăх. 3. Çулталăк пуçланнăранпа ӳт хуштарнă. 4. Çав шутра ака уйăхĕнче (грампа).**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Филиппова А. В. | Суворов яч. хис. | 548 | 500 |
| Михайлова Н. | Суворов яч. хис. | 548 | 500 |
| Арапкина Р. А. | «Свобода» | 530 | 640 |
| Степанова Л. И. | «Ударник» | 500 | – |
| Замкова Л. Н. | «Оринино» | 482 | 444 |
| Морозова Л. Ф. | «Оринино» | 474 | 423 |
| Алексеева Е. В. | «Ударник» | 442 | – |
| Мастеров С. Н. | «Свобода» | 368 | 410 |
| Белов А. П. | «Свобода» | 265 | 365 |
| Федоров С. В. | «Свобода» | 265 | 365 |
| Козыркина Ф. В. | «Свобода» | 265 | 365 |

### Мăйракаллă шултра выльăх самăртакансем

**1. Выльăх самăртакансем. 2. Хуçалăх. 3. Çулталăк пуçланнăранпа ӳт хуштарнă. 4. Çав шутра ака уйăхĕнче (грампа).**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Федорова В. Н. | Суворов яч. хис. | 1051 | 1770 |
| Ефимова З. К. | Суворов яч. хис. | 1051 | 1770 |
| Олгашова Л. В. | Суворов яч. хис. | 1051 | 1770 |
| Салдаева А. | «Восток» | 931 | 755 |
| Федотов В. С. | «Ударник» | 923 | 950 |
| Кольцова Л. И. | «Свобода» | 886 | 924 |
| Дедов В. А. | «Свобода» | 886 | 924 |

01 пĕлтерет, асăрхаттарать

# Пĕрлехи тимлĕхе ӳстермелле

Çу уйăхĕн 13-мĕшĕ тĕлне район территорийĕнче кăçал 14 пушар алхасрĕ. Ку вăл пĕлтĕрхи çак вăхăтпа танлаштарсан 5 тĕслĕх сахалрах. Кун пек чух сахалрах тени тимлĕхе çухатмалла тенине пĕлтермест.

Çу уйăхĕн 7-мĕшĕ. 11 сехет тĕлĕнче районти 37-мĕш номерлĕ пушар чаçне Юнкă ял тăрăхĕнчи 1-мĕш Май выççăлккинче пушар тухни çинчен хыпар çитет. Хăрушлăх куç умĕнче. Юнкă, Москакасси, Ярославка, Оринин ял тăрăхĕсенче хуралсем йĕркелеменрен тата кунта вĕсем йĕркеллĕ ĕçлеменрен чĕннĕ çĕре Муркашри пушар чаçĕнчен малалах çитме пултаракан çук. Анчах «Пушар хăрушсăрлăх требованийĕсем çинчен калакан техника регламенчĕ» Федераллă Саккун ыйтнă пек Муркашри пушар хуралĕ те инçетри инкекпе кĕрешме регламентра палăртнă пек 20 минутра çитеймест. Вĕсем çитнĕ çĕре вара инкек тӳсекенĕн килĕçурчĕ пĕтĕмпех «хĕрлĕ автан» тыткăнĕнче пулнă. Пушарнăйсем çине тăрса ĕçленипе çулăма пит сарăлма паман, анчах вырăнти ял тăрăхĕнче пушар хуралĕ пулманнипе пулăшу час çитейменрен «хĕрлĕ автан» кӳршĕсен хушма хуралтисен пĕр пайне те кĕллентерет.

Çак инкек вырăнсенче пушар хуралĕ çине ытларах тимлĕх уйăрмалли çинчен калать. Пур çĕре те Муркашри 37-мĕш пушар чаçĕ кĕске вăхăтра çитсе ĕлкĕреймест.

**К. ПОПОВ, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн инспекторĕ**

Пурнăçра хăйсен çулне тупнисем

# Ял ачи – Раççейăн профессионаллă инженерĕ

Пĕчĕк Анистрад та Турă пулăшнипе тата вăй-хăват панипе аслисем каланине ачаллах ăша хывса пынă. «Хутла вĕренесчĕ те çын пуласчĕ. Асатте-асаннесем курнă йывăр ĕçрен хăтăласчĕ те çĕр ĕçченне çăмăллăхсем туса парасчĕ», – çакнашкал шухăшсем сахал явăннă-и çамрăк çын ĕмĕтĕнче. «Ĕмĕтленнине пурнăçлама пултарăпши?» – ку ыйту та кун йĕркинчех пулнă.

Çамрăк арçын ачан ĕмĕтĕнчи шухăшсем ашшĕ (1892 çулта çуралнă хресчен Григорий Васильевич Ванюшкин) чиркӳпе прихут шкулĕн 3 класне çеç вĕреннинчен иртессипе çыхăннă пулнă. Амăшĕ (1903 çулта çуралнă хресчен хĕрĕ Екатерина Ермолаевна) хутла пачах пĕлменни епле йывăрлăх пулнине те Анистрад ачаллах туйнă. Çак туйăм хăваланă та ĕнтĕ ял ачине пĕлӳ çулĕпе.

Нумай ачаллă çемьере ытти ачисем 7 класлă пĕлӳ илнĕ пулсан, шкул партти хушшине ларсанах Анистрад малалла вĕренесси пирки шутлама пуçланă.

– Йывăр вăхăтра иртрĕ пирĕн ачалăх. Эпĕ паянхи Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Вомпăкасси ялĕнче 1942 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче çуралнă. Вăрçă ачисем эпир. Тăван Çĕр-шыв фашизмпа кĕрешнĕ вăхăтра атте-аннесемпе эпир те çителĕклĕ апат-çимĕç курман. Пĕрре тăхăннă кĕпене те эрни-эрнипе хывмасăр çӳреттĕмĕр. Анчах ытти çынсемпе пĕрле эпир те ырă малашлăха шаннă, атте-аннене вăй çитнĕ чухлĕ пулăшнă, – вăрçă вăхăтĕнчи тата ун хыççăнхи йывăр çулсене аса илсе калаçать Анистрад Григорьевич.

Çав йывăрлăхсем витĕр тухни пулăшнă та пулĕ ял ачине 2009 çулта Пĕтĕм Раççейри «Çулталăк инженерĕ» конкурса хутшăнма. Ачаллах тăрăшулăхпа палăрнăскер кунта та махха паман вăл. Конкурс ертӳçисем Анистрад Григорьевич Васильева (сăн ӳкерчĕкре) «Профессионаллă инженерсем» версипе «Ял хуçалăхне автоматизацилесси тата механизацилесси» номинацире çĕнтернĕ тесе йышăннă. Пирĕн ентеше «Раççейăн профессионаллă инженерĕн» 10-111 номерлĕ сертификатне панă.

Кам-ха вăл А. Г. Васильев? Çак ыйту хаçат вулакансене хумхантарĕ тесе çулталăк инженерĕпе тĕплĕнрех паллаштарăпăр.

Вомпăкасси ялĕнче хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ Анистрад Григорьевич Васильев 1958 çулта Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкултан вĕренсе тухать. Вăтам пĕлӳ



илсе Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумне вĕренме каять. Вĕренсен пуçа ăс кĕрет, çĕнĕ тĕллевсем вăй илеççĕ. Çапла вара техникумран вĕренсе тухсан 1962 çулта Анистрад малалла вĕренме Чăваш ял хуçалăх институчĕн «Ял хуçалăхне механизацилесси» факультета заявлени парать. 5 çул ним сисĕнмесĕрех иртсе каять. Тăрăшуллă каччăна, 1967 çулта ял хуçалăх институтне «питĕ лайăх» паллăпа вĕренсе пĕтернĕскерне, институтрах ĕçлеме хăвараççĕ. Кĕçех вăл куçăмсăр майпа вĕренсе «Техника наукисен кандидачĕ» ученăй степеньне илет.

Институтра тĕрлĕ çулсенче ассистент, преподаватель, аслă преподавательте ĕçленĕ Анистрад Григорьевич хальхи вăхăтра МГОУн Шупашкарти политехника институчĕн (филиалăн) «Автомобильсем тата автомобиль хуçалăхĕ» кафедра доцентĕнче ĕçлет.

А. Васильев анлă тавракурăмлă тата тарăн пĕлӳллĕ наука ĕçченĕ. Çĕннине шутласа кăларассипе çулленех ӳсĕмлĕ вăй хурать. Студентсемпе пĕрле тунă унăн икĕ изобретенийĕ 2009 çулта «У.М.Н.И.К.» номинацире çĕнтерсе 200-шер пин тенкĕлĕх икĕ гранта тивĕçнĕ. Тăрăшуллă наука ĕçченне Чăваш АССРĕн Аслă Канашĕн Хисеп грамотипе, РФ Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе, «СССР изобретателĕ» паллăпа, «Уçман çеремсене алла илме пуçлани 50 çул» астăвăм медалĕпе т. ыт. те наградăланă.

Анистрад Григорьевич 140 ытла наука ĕçĕсен авторĕ, производствăна кĕртнĕ 28 автор свидетельствисемпе патентсен хуçи.

– Мĕне пĕлтерет-ха сирĕн ятăр? – кăсăкланатăп калаçу вĕçленсе пынине сиссе.

Анистрад Григорьевич ман çине пăхса ăшшăн кулса илчĕ:

– Ку вăл хăй истори, Раççей пурнăçĕпе çыхăннăскер. Пĕлесех килет пулсан каласа парам. Манăн атте пĕрремĕш тĕнче вăрçин участникĕ. 1914 çулта фронтра вăл вырăссем майлă пулса çапăçнă Анистрад грекпа туслашнă. Пĕррехинче вĕсен çарне тăшмансем ункăна илсен Анистрада йывăр амантаççĕ. Атте ăна хул пуççи çинче йăтса тухать, анчах хамăрăннисем патне çитеймеççĕ вĕсем, тыткăна лекеççĕ. Австро-венгри концлагерьте иртет вĕсен тыткăнри пĕр пайĕ. Вăл тăрăхра ун чух тухăççăр çул пулнăран тыткăнрисем питĕ нумайăн выçса вилнĕ. Анистрад грек вара Хĕрлĕ Хĕрес урлă эрнесеренех апатçимĕç илсе тăнă. Илнĕ те кашни посылкăнах аттепе пайланă. Çавăн чухне атте хăйĕн ывăл çуралсан ăна юлташĕн ятне парăп тесе тупа тунă. 1920-1921 çулсенчи репатриаци (тыткăнрисене ылмаштарни) вăхăтĕнче атте киле таврăнать. 1922 çулта авланать. Тепĕр 20 çултан, эпĕ çуралсан, хăйĕн шухăшне пурнăçа кĕртет. Çапла вара Чăвашра та Анистрад ятлă çын пур.

Пултаруллă наука ĕçченĕн Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Вомпăкассинче хăйĕн хушма хуçалăхĕ пур. 40 сотка çĕр çинче унăн пĕр лаптăк та усăсăр выртмасть. 2003 çулта унăн килти хушма хуçалăхĕ районти чи илемлĕ хушма хуçалăхсем хушшинче çĕнтерӳçĕ пулни çакна çирĕплетет те.

Тăрăшуллă çын вăл пур çĕрте те маттур.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**